Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа – 64 çул

«14-мĕш хут хутшăнтăм Çĕнтерӳ парадне»

Историри чи хăрушă та юнлă вăрçă – Аслă Отечественнăй вăрçă вучĕ сӳннĕренпе кăçал 64 çул çитнине паллă турăмăр. 1410 куна пынă çак вăрçăра миллионшар салтакпа мирлĕ çыннăн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă. Унтанпа вăхăт сахал мар иртрĕ темелле. Анчах та çак вăрçă терчĕ-асапĕ, хуйхи-куççулĕ нихăçан та пирĕн асăмран тухас çук.

Çак кунсенче пирĕн хаçат сотрудникĕ вăрçă тата ĕç ветеранĕпе, отставкăри майорпа, РСФСР, ЧАССР тава тивĕçлĕ учителĕпе, халăха вĕрентес ĕç отличникĕпе, Мускаври Çĕнтерӳ парадне пĕр хут кăна мар хутшăннă Михаил Яковлевич ГАВРИЛОВПА тĕл пулнă, вăрçă хирĕнчи вăхăта, мирлĕ пурнăç çулĕсене тĕпĕр хут куç умне кăларма ыйтнă.

– Михаил Яковлевич, эсир вăрçă тата ĕç ветеранĕ, кунпа пĕрлех пирĕн районта сахал мар ĕçленĕ...

– Çапла, мана 1969 çулта Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăлти вăтам шкул директорĕ пулма çирĕплетиччен эпĕ 27 çул хушши Калайкасси, Муркаш, Юнкă шкулĕсенче пуçламăш классен истори учителĕ, шкул директорĕ пулса ĕçлерĕм. Вăрçăра пулнине шута илсен, республикăри шкулсенче учительте пĕтĕмпе 60 çул ĕçлерĕм.

– Мĕнле фронтсенче çапăçма тиврĕ-ха сирĕн?

– 1942 çулхи ноябрь уйăхĕнче Сталинград фронтĕнче çапăçма тытăнтăм. Ун чухне эпĕ 4-мĕш гварди стрелковăй корпусăн моторизациленĕ уйрăм разведка батальонĕн рядовой разведчикĕ пулнă. 1943 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче ураран йывăр амантрĕç. Шел пулин те, тепĕр 6 кунран, январĕн 22-мĕшĕнче, Ростов облаçĕнче манăн аслă пиччe Василий çĕре кĕчĕ. Вăл та артиллери разведчикĕ пулнăччĕ.

Сывалса тухнă хыççăн каллех фронта лекрĕм. 1-мĕш Белорусси тата 3-мĕш Прибалтика фронтĕсен шутĕнчи Хĕрлĕ Ялавлă, Суворов тата Кутузов орденĕсемлĕ 82-мĕш Ярцевски стрелковăй дивизин 601-мĕш стрелковăй полкĕн автоматчиксен ротин санинструкторĕ пултăм. 1944 çулхи мартăн 31-мĕшĕнче каллех йывăр амантăм, контузи пулчĕ. Госпитальтен тухнă хыççăн каллех хамăн тăван ротăна тавpăнма май килчĕ. 1944 çулхи октябрĕн 13-мĕшĕнче Рига хулине ирĕке кăларма хутшăнтăм. Вăрçă хыççăн пĕр хут кăна мар Рига хула ĕçтăвкомĕпе партин хула комитетĕнчен Тав çырăвĕсем килсе тăчĕç. СССР саланнă хыççăн вара кун пек çырусене илмен.

Белорусси тĕп хулине Минска, Польша тĕп хулине Варшавăна ирĕке кăларма, Берлина илме те хутшăннă.

Аслă Отечественнăй вăрçă орденĕпе, 3-мĕш степень Мухтав орденĕпе, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе (мирлĕ вăхăтра), «За отвагу», «За боевые заслуги» тата ытти медальсемпе наградăланă. 2004 çулта Белорусси Президенчĕ Лукашенко «За освобождение Белоруссии от немецких захватчиков» медальпе наградăларĕ. Çакна уявланă çĕре те чĕннĕччĕ. Пĕтĕмпе вара манăн правительство наградисем 26.

– Михаил Яковлевич, çапăçусенче пĕрле пулнисене вăрçă хыççăн тĕл пулма тӳр килнĕ-и?

– Çапла, хамăр дивизин пĕр полкри чылай салтакĕсемпе тата офицерĕсемпе тĕл пулнă. Çулленех эпир Мускавра Аквариум садра майăн 9-мĕшĕнче пухăнатпăр. Кун пек тĕл пулусене эпĕ 33 хут кайнă. Кунсăр пуçне пĕр полкрисем патĕнче хăнара Ашхабад, Одесса, Кишинев, Киев, Минск, Ленинград, Мускав хулисенче те пулман мар. Вĕсем те ман пата Юнкăна пырса çӳренĕ. Енчен те вăрçă хыççăнхи малаpахри çулсенче пĕр полкра çапăçнисен йăлана кĕнĕ тĕл пулăвĕсене 250 çын ытла пуçтарăнатчĕ пулсан, халĕ вĕсен йышĕ сахалланса юлчĕ. Чылайăшĕ çĕре кĕчĕ, теприсем чирсене е ватлăх çулĕсене пула тухса çӳреме пултарайманччĕ. Иртнĕ çул тата кăçал тĕл пулăва 10 фронтовик кăна пычĕ.

– Эсир Аслă Çĕнтерĕвĕн Мускаври Хĕрлĕ площадьри парадне темиçе хут та хутшăннине пĕлетпĕр. Парадра кăçал та пулма тӳр килчĕ-и?

– Кăçалхипе унта 14-мĕш хут хутшăнма май килнишĕн хама телейлĕ тесе шутлатăп. Кăçал пире сылтăм енчи 2-мĕш трибуна çинче пулма пропусксем пачĕç. Ку вăл Мавзолейпа юнашар. Мавзолей умĕнче пирĕнтен 20–30 метрта çĕршыв ертӳçисен вăхăтлăх трибуни вырнаçнăччĕ. Эпир Раççей Президенчĕ Д.А. Медведев тухса калаçнине курма тата итлеме пултартăмăр.

Кăçал Çĕнтерӳ парачĕ уйрăмах илĕртӳллĕ иртрĕ. Парадра çар çыннисем те, çар техники те унченхи çулхисенчен ытларах пулчĕç. Оркестрти музыкантсен хисепĕ кăна 1000 çын ытла. Эпир Хĕрлĕ площаде Раççей тата Çĕнтерӳ Ялавĕсене илсе тухнисене аван курма пултартăмăр. Çак Çĕнтерӳ Ялавĕ ĕнтĕ Берлинта 1945 çулта Рейхстаг çинче вĕлкĕшнĕ.

Парадри асăмран тухма май çук çак самантсене эпир сăн ӳкерсе юлма пултартăмăр: оборона министрĕ Сердюков çар парадне йышăннине те, Хĕрлĕ площадьпе иртекен çар техникине те, тӳпере вĕçсе иртекен çар самолечĕсемпе вертолечĕсене т. ыт. те. Каçхине вара çĕршер орудирен паракан салюта гостиницăн 15-мĕш хутĕнчен курса килентĕмĕр.

– Сирĕнтен татах акă мĕн пирки ыйтса пĕлес килет. Эсир вăрçăра та пулнă, вăрçă хыççăн халăх хуçалăхне ура çине тăратассишĕн те çине тăрса ĕçленĕ. Кун пирки хăвăрăн асаилӳсене пичетлесе кăларас шухăш çук-и сирĕн?

– Кун пирки тахçанах шухăшланă. Шуршăлта Космонавтика музейне туни тата чылай космонавтсемпе тĕл пулни пирки кĕнеке пичетлесе кăларнă-ха эпĕ. Çак кунсенче ачалăх тата шкул çулĕсем, Юнкă тата Пĕрремĕш Май выççăлкки ялĕнче пурăнакансем пирки асаилӳсен кĕнеки кун çути курчĕ. Вăрçă çулĕсем пирки иккĕмĕш кĕнеке пичетрен çак çулталăк вĕçĕнче тухмалла. Çавăн пекех вăрçă хыççăнхи йывăр çулсем, хам ĕçленĕ шкулсем пирки тепĕр кĕнекене Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнĕ тĕле вĕçлеме шухăшлатăп.

Анчах та çулсем унченхи мар ĕнтĕ. Вăрçă суранĕсем те аса илтерсех тăраççĕ. Пирĕншĕн вара, мăшăрăмпа иксĕмĕрĕншĕн, ку çулталăк юбилейлă. Эпĕ 85 çул, 41 çул математика учителĕ пулса ĕçленĕ мăшăрăм Виктория Николаевна 80 çул тултарать.

– Михаил Яковлевич, сире калаçăва хутшăннăшăн пысăк тав. Май килнипе усă курса вара юбилейсем ячĕпе чĕререн саламлатăп, татах нумай çул килĕштерсе пурăнма ырлăхсывлăх, ăнăçу, телей сунатăп.

В. ШАПОШНИКОВ
калаçнă.

Л.П. Сергеев 80 çул тултарчĕ

Муркаш районĕн хисеплĕ çынни



Талантлă та пултаруллă ывăл-хĕрĕпе чăннипех те пуян Муркаш енĕ.

Чăваш чĕлхин паллă тĕпчевçи, филологи ăслăлăхĕсен докторĕ Леонид Павлович Сергеев профессор çак кунсенче 80 çул тултарать. Хăйĕн кун-çулне пирĕн ентешĕмĕр пĕтĕмпех ăслăлăха – чăваш чĕлхи ăслăлăхне тата вăтам шкултан вĕренсе тухакан çамрăксенчен тăван чĕлхепе литература вĕрентекенĕ хатĕрлес ĕçе халалланă.

Л. П. Сергеев Муркаш районĕнчи Çурлатри ялĕнче 1929-мĕш çулхи июнĕн 3-мĕшĕнче çуралнă. «Анне тесе кураймарăм эпĕ», - каласа парать ăсчах. Леонид Павлович пĕчĕклех çурма тăлăха тăрса юлнă, унăн амăшĕ – Сергеева Дария Ивановна – ывăлĕ пилĕк çул çурăра чухне вилнĕ. Ашшĕ – Павел Сергеевич Сергеев – Чăваш АССР тава тивĕçлĕ учителĕ, пуçламăш шкулта вĕренмелли кĕнеке авторĕ.

1935-1939 çулсенче Леонид Павлович Çурлатринчи пуçламăш шкулта вĕреннĕ (ăна 1925 ç. унăн ашшĕ тăрăшнипех уçнă пулнă), ун хыççăн вара ялти ытти ачасемпе пĕрле виçĕ çухрăмра ларакан Муркашри вăтам шкула вĕренме çӳренĕ.

«Икĕ çул кăна мирлĕ тапхăр вăхăтĕнче вĕренме тӳр килчĕ», – аса илет профессор. 1941 çулта Тăван çĕршывăн аслă вăрçи пуçланнă, алла пăшал тытма пултаракан çынсене пурне те вăрçа илсе кайнă. Мĕн кăна ĕçлемен-ши вăл вăхăтри ачасем фронта пулăшас тĕллевпе. Сивве те, ăшша та, чир-чĕре те тӳссе ирттернĕ, хăрушă вăрçăра пирĕн халăх çĕнтерессе çирĕп шаннă. Вĕренме те çăмăл пулман вăл вăхăтра: «Учебниксем çукки касатчĕ, çырмашкăн тетрадьсем те пулман, вĕсем вырăнне кивĕ кĕнекесен страницисемпе, хаçатсемпе усă курнă. Çырмалли чернила юман çăпанĕнчен тунă», – аса илет ăсчах.

Л. П. Сергеев 1945 çулта Чăваш патшалăх педагогика институчĕн чăваш уйрăмне вĕренме кĕнĕ. Кунта вăл чăваш чĕлхи ăслăлăхĕн ыйтăвĕсене С. П. Горский, В. Г. Егоров, Н. А. Резюков лекцийĕсене итленĕ. Вăрçă хыççăнхи çулсенче аслă пĕлӳллĕ вĕрентекенсем çитмен пирки 3 курс хыççăн Леонид Павлович Муркаш районĕнчи Тойкилтĕри çичĕ çул вĕренмелли шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентме тытăнать. Пултарулăхне кура ăна Тойкилтĕ шкулĕн вĕрентӳпе воспитани пайĕн ертӳçинче, кайран вара шкул директорĕнче ĕçлеме ыйтаççĕ.

Леонид Павлович шкул ĕçĕпе пĕрлех тĕпчев ĕçне те кӳлĕнет: вырăнти калаçу уйрăмлăхĕсене интересленсех тĕпчеме тытăнать вăл, Шупашкарти наука тĕпчев институчĕн чĕлхе секторĕпе çыхăну тытать. Калинино районне диалектологи экспедицине кайсан вара паха материал пухса таврăнать. Муркаш райĕçтăвкомĕн çутĕç пайĕн заведующине ĕçлеме куçарсан та Л. П. Сергеев шкулсенче пулмассерен кашни ялăн чĕлхе уйрăмлăхĕсене тимлесе тĕпчет, пухнă материалпа усă курса «Основные особенности Моргаушского говора» ятлă статьяна «Материалы по чувашской диалектологии» (1960) статьясен пуххинче (1-мĕш кăларăм) пичетлет. 1961 çулта вăл Чăваш патшалăх педагогика институчĕн чăваш чĕлхипе литература кафедри çумĕнчи аспирантурăна вĕренме кĕрет.

1965 çулта Л. П. Сергеев «Чăваш чĕлхин Вăрмар калаçăвĕ» темăпа çырнă диссертацие ăнăçлă хӳтĕлесе филологи наукисен кандидачĕн ятне тивĕç пулать. Вăл унта Вăрмар калаçăвĕн фонетика, лексика, грамматика паллисене диалектологи карттисем туса кăтартса панă.

Аспирантура хыççăн Леонид Павловича Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи чĕлхе, литература, истори тата экономика наука тĕпчев институтне ĕçлеме чĕнеççĕ. Çакăнтан пуçланать те ĕнтĕ юбилярăн ăслăлăх çул-йĕрĕн пуçламăшĕ. Кунта вăл чăваш чĕлхин диалектсен системине пĕтĕмĕшле тĕпчес ĕçе пуçăнать. Республика районĕсене студентсемпе пĕрле çулсерен экспедицисене çӳрет, çителĕклĕ таран материал пухас тесе вăй хурать. Ял шкулĕсенче ĕçлекен учительсем те ăна чылай пулăшса пынă. Пухнă материала системăласа Л. П. Сергеев вырăнти калаçу уйрăмлăхĕсене карттăсем çине ӳкерсе тухать. Çемьере килĕшӳ пулсан ĕçлеме те çăмăлрах, çак пысăк ĕçре ăна мăшăрĕ – Татьяна Николаевна Сергеева – пулăшса пынине яланах палăртать Леонид Павлович. Атласра пурĕ 448 картта. Вĕсем тăрăх вырăнти калаçусемпе диалектсем мĕнле аталанса пынине, вĕсен чиккисене тĕрĕс палăртма пулать.

Çирĕм çул хушши çырнă «Чăваш чĕлхи диалекчĕсен системи (Диалектологи атласĕ)» ĕçĕпе Л. П. Сергеев 1973 çулта Бакури Азербайджан патшалăх университетĕнче доктор диссертацине ăнăçлă хӳтĕленĕ. Азербайджан Наукăсен Академийĕн академикĕ М. Ш. Ширалиев пирĕн ентеш ĕçне пысăк хак панă: «Хăш-пĕр тĕрĕк халăхĕсем ушкăнпа тăвайман ĕçе Л. П. Сергеев пĕччен тума пултарчĕ. Атласа пичетлесе кăларни чăваш чĕлхи ăслăлăхĕшĕн çеç мар, тĕрĕк чĕлхине тĕпчекенсемшĕн те калама çук усăллă пулĕ».

1972 çулта Леонид Павловича Шупашкарта РСФСР Çутĕç министерствин Наци шкулĕсен наука тĕпчев институчĕн лабораторийĕн ертӳçи пулма ыйтаççĕ, çак ĕçре вăл 1984 çулченех вăй хурать. Çак хушăра чăваш шкулĕсем валли тăван чĕлхепе литература программисемпе учебникĕсене, тĕрлĕ вĕренӳ кĕнекисемпе пособийĕсене чылай хатĕрлет. 1970-мĕш çулсен пуçламăшĕнче «Совет Союзĕнчи тĕрĕк чĕлхисен диалектологи атласне» хатĕрлес ĕçе хастар хутшăннă (шел пулин те, çĕр-шыв арканнă пирки атлас пичетленсе тухайман), 1976 çулта ЮНЕСКО ертсе пынипе «Европăри чĕлхесен атласне» тăвас ĕçе те хастар хутшăннă, унта вăл чăваш чĕлхипе çыхăннă материала пухса кĕртнĕ.

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.).

Библиотекăсен кунне халалласа

Форум тивĕçлĕ шайра иртрĕ

Майăн 27-мĕшĕнче Раççейре Библиотекăсен пĕтĕм Раççейри кунне паллă турăмăр. Библиотекăсем хальхи вăхăтра обществăн социаллă тата интеллектуаллă аталанăвĕн уйрăлми пайĕ пулса тăраççĕ. Библиотекăсен Раççей обществин пĕтĕм истори тапхăрĕнчи пурнăçĕнчи вырăнĕпе пĕлтерĕшне уçса парасси хальхи вăхăтшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ задача пулса тăрать.

Çак куна халалласа майăн 27-мĕшĕнче районти Культура çуртĕнче «Ăнăçу патне – вулав урлă» ятпа библиотека ĕçченĕсен районти форумĕ иртрĕ. Унта районти библиотекăсен информацип тивĕçтерессин пайĕсен заведующийĕсем, шкул библиотекарĕсем, Муркаш шкулĕпе лицейĕнче вĕренекенсем, активлă вулавçăсем хутшăнчĕç. Ял тăрăхĕсем хушшинчи Муркашри тĕп библиотека ĕçченĕсен уяв кунне халалласа «Библиотека – информацип культура центрĕ» ятпа информаци выставкине йĕркелерĕç. Унта библиотекăсем пирки калакан материалсемпе, библиотека ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă çынсем пирки паллашма май пулчĕ. Районти библиотекăсем пирки слайд та кăтартрĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕ ячĕпе информацип реклама баннерĕсен конкурсĕнче мала тухнисене Хисеп грамотисемпе Тав çырăвĕсем пачĕç. Вĕсем шутĕнче Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп, Кашмашри тата Шурчари библиотекăсем.

Ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотека директорĕ Т.Е. Королькова пухăннисемпе интерактивлă калаçу ирттерчĕ. Библиотекăсен ĕçĕн пĕлтерĕшĕпе вырăнĕ пирки ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов, район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн тĕп специалисчĕ Е.Г. Чернова, ача-пăчасен районти тĕп библиотекин информацип тивĕçтерессин пайĕн заведующийĕ Е.И. Налимова, кĕнеке вулама юратакан Лукинсен çемйи, Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л.Г. Ковалева, М.В. Виноградова тата А.Н. Николаева ĕç ветеранĕсем сахал мар ырă сăмах каларĕç.

Районти çамрăк библиотекарьсем «Библиотека – манăн тивĕç: çамрăксен куçĕпе» электронлă презентаци ирттерчĕç. Çамрăк библиотекарьсем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарни вара чăн-чăн уяв саманчĕ пулса тăчĕ. Библиотекарьсене хăйсен професси уявĕпе Йӳçкассинчи «Туслăх» тата Çурлатринчи Культура çуртĕнчи «Сеспель» коллективсем саламларĕç.

Э. ДИМИТРИЕВА,
ял тăрăхĕсем хушшинчи Муркашри тĕп библиотекăн инновациллĕ методика пайĕн ертӳçи.

Вулакан пултарулăхĕ

Чавса çывăх, çыртма пулмĕ

Тăван çĕрĕм, каçарсамччĕ
Хăвна маннă çынсене.
Турăçăм, ăс-тăн парсамччĕ
Ухмаха эрнисене.

«Хырăм тутă, урăх выçмĕ»,–
Теççĕ пулĕ хăшĕсем.
Çак хăрушă çылăх каçмĕ,
Нуша курĕç ачасем.

Чавса çывăх, çыртма пулмĕ
Ăнлансассăн йăнăша.
Вăй хумасăр пӳлме тулмĕ,
Ан çухатăр шанăça.

Апат-çимĕç ют çĕршывăн
Пĕртте пире валли мар.
Имçамсемлĕ, ГМО-ллă...
Кайран пулĕ-çке начар.

Ачасем те çуралаймĕç
Çак çимĕçсене çисен,
Ăрусем пире ăнланмĕç
Пурнăç саланса пĕтсен.

Эрехпе-и алхасмашкăн
Йывăр çак саманара?
Пирĕнтен пăхать кулмашкăн
Доллар йăхĕ анăçран.

Ял çынни! Курма вĕрен-ха
Хăвăнтан чăн кулнине,
Чĕркуççи çинчен çĕклен-ха,
Пĕлччĕр çăкăр аслине.

П. ВОРОБЬЕВ.